27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944
ОКТЯБРЬ
11
ЮНКУН
201(6696) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Шупашкар районĕнчи колхозниксен паха пуçарăвĕ

Колхозри ĕçсем халĕ ĕнтĕ пĕтĕмпех итем çинне куçрĕç: кĕлте кÿрсе капана хывассине республикăри ялхуçалăх артелĕсем, пĕтĕмĕшпе илсен, вĕçлерĕç; кĕраки туса пĕтернĕ; хирте халĕ кĕрхи çĕртме тăвакан колхозниксем кăна ĕçлеççĕ. Колхоз пурнăçĕпе ĕçĕ халĕ ялта, пуринчен ытла итем çинче, вĕресе тăрать. Яла пыракан çын урамра пĕр çынна та кураймасть пулсан, çакăнтан вара нимĕн тĕлĕнмелли те çук, мĕншĕн тесен халĕ урамра ĕççĕр сĕтĕрĕнсе çÿреме вăхăт мар, халĕ кашни колхозникпе колхозница çĕртме тунă е авăн çапнă çĕрте итемре пулмалла. Çакăнтан вара акă мĕн уççăнах курăнса тăрать: халăх итем çинче пулсан, ăна ертсе пыракансем те, —кладовщикрен пуçласа колхоз председателĕсем таранах, — итем çинче пулмалла. Вĕсен кунта ĕçе организацилесе ертсе пымалла: пĕр ĕçре ытлашши нумай çын чăкраштса ĕçлени, тепĕр çĕрте çынсем çитмен кирки ĕç чарăнса тăни ан пултăр; ĕçлеме тухнă колхозниксем тĕрлĕ ĕçе тума тĕрĕс вырнаçса тăччăр: молотилка патĕнче те, алăпа çапнă çĕрте те, государство валли тырă е ытти çимĕçсем турттарнă çĕрте те, çĕрулми кăларса нÿхрепе хывнă çĕрте те, кĕрхи çĕртме тунă çĕрте те, выльăх-чĕрлĕх валли ăшă вите хатĕрленĕ çĕрте те, — колхозри пур ĕçре те май пур таран çителĕклĕ ĕç вăйĕ пултăр. Пĕр ĕçе кая хăварса, тепĕрне кăна тума тăрăшни — ĕçе организацилеме пĕлменни пулнă пулĕччĕ. Пур ĕçсем те вăхăтра тунине юратаççĕ; ĕç вăйне вырнаçтарса тăратма пĕлсен, ĕçе организацилеме пĕлсен кăна вăл кал-кал пулса пырать. Çапла пултăр тесен, колхозри пур ĕçсене те вăхăтра туса пыма ĕç вăйĕ çиттĕр тесен, колхоз председателĕпе бригадирсен ĕçлеме пултаракан кашни колхозникех ĕçе явăçтарма тăрăшмалла. Кирлех пулсан, хăйсен те авăн çапнă е тырă турттарнă çĕрте ытти колхозниксемпе пĕрле ĕçлемелле. Самахрен, пĕр-пĕр колхоз председателĕ [illegible]

...сударствăна тырă парас ĕçĕн хăвăртлăхĕсене ÿстерсе мар, чакарса пыраççĕ, часрах тĕрлĕ фондсем тума васкаççĕ. Çак тĕрĕс мар йăлана пĕтерес пулать.

Паян эпир Шупашкар районĕнчи колхозсене уйрăмах хисеплесе палăртатпăр. Вĕсем, Тăван çĕршывăн оборона вăй-хăватне тĕреклетме тăрăшса, республикăра калама çук паха патриотла юхăм пуçарса ячĕç. Енер республикăри хаçатсенче Шупашкар районĕнчи колхоз председателĕсем Чăваш республикинчи мĕнпур колхозсене чĕнсе калани пичетленсе тухрĕ. «Эпир, — тесе çыраççĕ вĕсем, — çак çывăхри 3—4 кун хушшинче планран ирттерсе Хĕрлĕ Çар фондне 12.000 пăт тырă пама пултăмăр тата сире, Чăваш республикинчи колхозниксемпе колхозницăсем, колхозсен руководителĕсем, çакна пурнăçа кĕртме чĕнетпĕр:

1. Çывăхри 3—4 кун хушшинче государствăна тырă памалли плана мĕнпур колхозсем тăрăх пĕтĕмпех тултарса çитермелле;

2. Пирĕн примера йышăнса, государство валли Хĕрлĕ Çар фондне çĕнĕрен çĕршер те пиншер пăт тырă парар. Вăрçăн çак татăклă тапхăрĕнче Хĕрлĕ Çара пĕтĕм вăйпа тата пур майсемпе те пулăшар!»

Шупашкар районĕнчи колхозниксем тырă халĕ Тăван çĕршывпа фронта боеприпас пекех кирлине, тырпулшăн кĕрешни çĕнтерÿшĕн кĕрешнинех пулнине ăнланаççĕ. Çавăнпа та ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ вĕсен пуçарăвне ырларĕ тата çак паха юхăма ытти районсенче те анлăн сарса пыма хушрĕ.

Пирĕн çĕршывра кирек мĕнле пуçарăва та, вăл усаллă тата хамăрăн государствăна тĕреклетме пулăшать пулсан, пĕтĕм халăх хăвăрт йышăнса илет. Шупашкар районĕнчи колхоз председателĕсем канашланă сехетсенче вĕсемпе ăмăртса ĕçлекен Вăрнар районĕнчи колхозниксем те Тăван çĕршывăн оборона вăй-хăватне тĕреклетес- [illegible]

Ĕççынни депутачĕсен райсовечĕсен исполкомĕсемпе ВКП(б) райкомĕсем тăратнă тăрăх, тырпул пухса кĕртес ĕçре тухăçлăн тата лайăх ĕçленĕшĕн ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри Хисеп хăми çине çак колхозсене кĕртнĕ:

Сĕнтĕр районĕ тăрăх

72. **«КИМ»** колхоз (председателĕ Савельев юлташ). Вăл тырăсене 19 кун хушшинче вырса пуçтарнă, августăн 18-мĕшĕ тĕлне кĕрхи тырăсене акса пĕтернĕ, сентябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне авăн çапса пĕтернĕ, государствăна тырă срокчен парса татнă тата 1945 çулшăн аванс шучĕпе 540 пăт тырă парса хунă.

73. **«Кубас»** колхоз (председателĕ Трифонов юлташ). Ку колхоз тĕштырăсене вăхăтра вырса пуçтарнă, сентябрĕн 21-мĕшĕ тĕлне авăн çапса пĕтернĕ, кĕрхи тырăсене чи лайăх вăхăтра акса хăварнă, государствăна тырă срокчен парса татнă тата 1945 çулшăн аванс шучĕпе 540 пăт тырă парса хунă.

74. **Киров ячĕпе тăракан колхоз** (председателĕ Кабуркин юлташ). Ку колхоз кĕске вăхăтра тырă вырса пуçтарнă, кĕрхи тырăсене августăн 20-мĕшĕ тĕлне акса пĕтернĕ, государствăна тырă срокчен парса татнă тата 1945 çулшăн аванс шучĕпе 900 пăт тырă парса хунă.

75. **Каганович ячĕпе тăракан колхоз** (председателĕ Швельник юлташ). Колхоз тырăсене кĕске срокра вырса пĕтернĕ, кĕрхи тырăсене чи лайăх вăхăтра акса хăварнă, государствăна тырă срокчен парса татнă тата 1945 çулшăн 720 пăт тырă парса хунă.

Совет Информаци Бюровĕнчен

ОКТЯБРĔН 9-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Октябрĕн 9-мĕшĕнче САРЕМА (ЭЗЕЛЬ) утравĕ çинче пирĕн çарсем, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан 50 пункта ытла тытса илнĕ, çав шутра — **УНДА, МЕТСА, КЫРУСЕ, КУРЕВЕРЕ, КИХЕЛЬКОННА, ВЕДРУКА, КАРАЛА, ЛЮМАНДА, ТОМАЛЫУКА, МЕТСАЛЫУКА, ТЕХУМАРДИ, УЙДИБЕ** ятлă пысăк ялсем.

РИГА енче пирĕн çарсем малалла тапăнса пынă. ЕСПАРС, ЯУНЗЕМНИЕКИ, ТЫЛТЫНИ, ГРИТЮКРОГС, РЕЙПАС, ЛАУНАГИ, РУЦЕНЕС, КЛИДИ ятлă ялсене тата **ВАНГАЖИ** ятлă чугун çул станцине тытса илнĕ.

ШАУЛЯЙ (ШАВЛИ) хулинчен хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă, халăх пурăнакан 300 пункта ытла йышăннă, çав шутра — **ЮРБАРКАС (ЮРБУРГ)** хули, **КЕРЬЯЙ, БАРСТИЧЯЙ, КАЛВАРИЯ, АЛСЕДЖЯЙ, ПЛАТЕЛЯЙ, КУЛИ, ВЕЖАЙЦЕ (МЕМЕЛЬ** хулинчен 20 километр хĕвелтухăçнерехре), **БРОЖЕ, ВЕВИРЖАНЫ, ЮДРАНЫ, ПОЮРЖЕ, ПОЮРЫ, БЫКОВЯНЬ, ШАКВИЦЕ, ГАВРЫ** ятлă пысăк ялсем тата **ТАРВОЙНЕ, БАТАКЯЙ, ЮДПЕТРЯЙ** ятлă чугун çул станцийĕсем.

НАРЕВ шывĕн сылтăм хĕрринче ПУЛТУСК хулинчен кăнтăртарахри районра пирĕн çарсем тăшман пехотипе танкĕсен пур атакисене те сирсе янă. Октябрĕн 8-мĕшĕнче çав участокра нимĕçсен 94 танкне çĕмĕрсе тăкнă.

Çурçĕр Трансильванире РЕГИН хулинчен хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем, Румыни çарĕсемпе пĕрле кĕрешсе, **СЫНТУ, ФАРАГО, ЕРЧА, БАЛА, МОЙША, КЫМПЕНИЦА, МЕЗЭ ЧАВОШ, ХЕРГЕЛЬЯ, КУЕШД, ХАРЦО, ЦИПТЕЛНИК, ПАНЕТ, БЕРГИ** ятлă ялсене йышăннă.

Венгри çĕрĕнче ДЕБРЕЦЕН хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă, **НАДУДВАР, ПЮШПЕК-ЛАДАНЬ, ДЕВАВАНЬЯ, ТУРКЕВЕ, КАРЦАГ, ХАЙДУ-СОБОСЛО (ДЕБРЕЦЕН** хулинчен 18 километр кăнтăр-хĕвеланăçнерехре) хулисемпе пысăк чугун çул узелĕсене тытса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 100 пункта ытла йышăннă, çав шутра—**КАБА, БАРАНД, РАКОЦИ, ЕЧЕД** ятлă пысăк ялсем тата **КАБА, ПУСТА, ЭЧЕГ, ТЕНИЕ, КЕНДЬЕЛ, МАРТФЮ, ТИССА ФЕЛЬДВАР** ятлă чугун çул станцийĕсем. **НАДУДВАР** тата **РАКОЦИ** районĕсенчи аэродромсенче пирĕн çарсем нимĕçсен 140 самолетне тытса илнĕ. Октябрĕн 8-мĕшĕнче пирĕн çарсем нимĕçсемпе венгерсен 4.220 салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ. Виçĕ кун хушшинче нимĕçсемпе венгерсен 8.220 салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ.

Югославире ВЕЛИКА КИКИНДА хулинчен хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем **ТИССА** шывĕ урлă каçса кайнă та унăн хĕвеланăç сыранĕнче **СЕНТА** хулипе чугун çул узелне, **СТАРИ БЕЧЕЙ** хулипе чугун çул узелне тытса илнĕ, çавăн пекех тата **СТАРАЯ КАНИЖА, АДА, МОЛ** ятлă пысăк ялсене йышăннă.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведчиксем шыраса çÿренĕ тата тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Октябрĕн 8-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 202 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 26 самолетне персе ÿкернĕ.

☆ ☆ ☆

Ленинград фрончĕн çарĕсем Сарема (Эзел) утравĕ çинче çаплах наступлени туса пынă. Нимĕçсен аркатса тăкнă чаçĕсене хăваласа пырса, пĕр соединени боецĕсем 20 километр таран малалла кайнă та çав утравăн хĕвеланăç енчи сыранĕ патне пырса тухнă. Тăшман пысăк çухату тÿсет. Пĕр участокра пирĕн пĕр стрелковăй чаçăн подразделенийĕсем 700 нимĕç салтакĕпе офицерне çити вĕлерсе пĕтернĕ. Тепĕр районра пирĕн боецсем тăшман пехотине тинĕс хĕррине хĕссе лартнă. Нимĕçсем вара хĕçпăшалĕсене пăрахнă та тыткăна пăрăннă.

* * *

Шауляй (Шавли) хулинчен хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем ăнăçлăн наступлени туса пынă. Калвария ялĕ районĕнче совет çарĕсем тăшман çарĕсен ушкăнне аркатса тăкнă, эсэсовецсен «Аслă Германи» ятлă танковăй дивизийĕн 27 танкне тытса илнĕ. Çав районрах совет танкисчĕсем шоссе çулĕ патне татса кĕнĕ те нимĕçсен автоколоннине пÿлсе лартнă. Малта пыракан бронетранспортерсемпе вĕсен хуралне пĕтерсе тăкса, пирĕн боецсем 100 автомашина ытла тытса илнĕ. Шауляй хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн наступлени туса пыракан чаçсем тăшманăн Хĕвелтухăç Пруссие кĕмелли вырăнсене хÿтĕлекен рубежĕ патне пырса тухнă. Çав рубежра темиçе рет траншея тунă, унта тимĕрпе бетонран дотсем тата бронеколпаксем туса лартнă, танксене чармалли канавсем алтса тухнă, вĕсене юпасем, мина хирĕсем тата пралук картисем хÿтĕлесе тăраççĕ. Совет танкĕсемпе пехоти, артиллери пулăшнипе, нимĕçсене вăйлăн пырса çапнă та вĕсем хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкнă. Пĕр соединени чаçĕсем Юрбаркас (Юрбург) хулинчен çурçĕр-хĕвеланăç енĕпе иртсе кайнă та ăна çĕрле штурмлама пуçланă. Урамсенче ирчченех çапăçнă. Паян пирĕн çарсем нимĕçсен Неман шывĕ çинчи тĕреклетнĕ паха пунктне—Юрбаркас (Юрбург) хулине тытса илнĕ. Тăшман питĕ пысăк çухату тÿсет. Кун каçиччен нимĕçсен 4.000 салтакĕпе офицерне çити вĕлерсе пĕтернĕ. Пирĕн çарсем танксем, хир тупписемпе зенитнăй тупăсем, пулеметсем, автомашинăсем нумай тата тĕрлĕ çар пурлăхĕ хунă складсем тытса илнĕ.

* * *

Пултуск хулинчен кăнтăртарахра тăшман танкĕсемпе пехотин йышлă вăйĕсем пирĕн çарсен Нарев шывĕн сылтăм хĕрринчи плацдарма каллех пĕтерсе лартма хăтланнă. Кун каçиччен нимĕçсем 20 хутчен атакăланă. Совет пехотинецĕсемпе артиллерисчĕсем тăшман хĕснине тÿссе иртнерĕ, хăйсен позицийĕсене алăран яман. Нимĕç пехотине пĕр полк таран пĕтерсе тăкнă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн персе çĕмĕрнĕ с çунтарса янă танкĕсемпе хăй тĕллĕн çÿрекен тупписем темĕн чухлех ларса юлнă.

* * *

Венгри территорийĕнче пирĕн çарсем, вирлĕн пырса çапса, Хайду-Собосло хулине тытса илнĕ. Пирĕн ытти чаçсем Хотобать-Чаторна каналĕ çинче тăшман вăйлă хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкнă та Картаг хулипе чугун çул станцине йышăннă. Дебрецен хулипе Будапешт хули хушшинчи чугун çулпа шоссе çулне татнă. Çав çапăçусенче тăшманăн 3.000 салтакĕпе офицерĕ ытла пĕтнĕ. Туллимар даннăйсем тăрăх, пирĕн çарсем виçĕ кун хушшинче 26 танкпа хăй тĕллĕн çÿрекен тупă, 66 хир туппи, 1000 лав ытла, 11 поезд тата тĕрлĕ япала тиенĕ 600 вагон тытса илнĕ. Уйрăм участоксенче тăшман çĕнĕ вăйсем илсе пынă та темиçе хут та контратака тунă. Нимĕçсемпе венгер çарĕсен контратакисене ăнăçлăн сирсе ярса, пирĕн çарсем малалла куçса пыраççĕ.

* * *

Хĕрлĕ Ялавлă Балтика флочĕн авиацийĕ Рига заливĕнче тăшман карапĕсене тăтăшах пыра-пыра çапнă. Октябрĕн 6-мĕшĕпе 7-мĕшĕнче пирĕн торпедоносецсемпе бомбардировщиксем тăшманăн 4 транспортне, хăвăрт çÿрекен 6 десант баржине, хурал карапне тата хурал катерне шыва путарнă. Октябрĕн 8-мĕшĕнче совет летчикĕсем нимĕçсен 3000 тонна таякан танкерне, пĕрле 11.000 тонна таякан 2 транспортне тата 3 мотоботне шыва путарнă.

Вăрман хатĕрлесси — оборонăлла ĕç

Пирĕн республика чугун çул транспорчĕ валли вутă тата кăмрăкпа руда кăларакан промышленность валли йывăç хатĕрлет. Çак ĕçе пирĕн тăтăшах ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пымалла. Калас пулать, вăрçăпа хуçалăх тĕлĕшĕнчен паллă вырăнта тăракан çав ĕçе пурнăçа кĕртсе пыма — вăрман хатĕрлемелли плана тултарса пыма пирĕн кирлĕ условисемпе майсем çителĕклĕ таранах пур. Республикăри вăрман хатĕрлекен организацисенчен чылайĕшĕсем хăйсен планне тултармаççĕ пулсан, çакă вара пĕтĕмпех район руководителĕсемпе вăрман хатĕрлекен предприятисен работникĕсем çав задачăна тивĕçлипе хакламаннинчен килет.

Чугун çул валли вутă хатĕрлес тĕлĕшпе Улатăр районĕ (райсовет исполкомĕн председателĕ Поверенов юлташ, ВКП(б) райком секретарĕ Горбунов юлташ), Красноармейски район (Александровпа Григорьев юлташсем), Хĕрлĕ Чутай районĕ (Захаровпа Г. Захаров юлташсем), Ишлей районĕ (Петров юлташпа Пидуганов юлташ) тата Элĕк районĕ (Ефремов юлташпа Федотов юлташ) кая юлса пыраççĕ. Предприятисем хушшинче Хĕрлĕ Чутай (начальникĕ Богоявленский юлташ) тата Çĕмĕрле (начальникĕ Клячкин юлташ) вăрман пункчĕсем, Буинскри (директорĕ Васильев юлташ), Вăрнарти (директорĕ Непримеров юлташ) вăрманпромхозĕсемпе Кирери вăрман хуçалăхĕ начар ĕçленине палăртмалла.

Асăннă предприятисемпе районсем вăрманта ĕçлекенсем улшăнса тăрассине пĕтермен, вĕсем рабочисем ĕçрен хăйсен ирĕкĕпех тухса кайнипе килĕшсе лараççĕ, ĕç фронтĕнчи дезертирсене хирĕç кĕрешмеççĕ. Вăхăт ĕнтĕ çавăн пек йĕркесĕрлĕхсене пĕтерме. Вăрман хатĕрлевĕ вăрçăпа хуçалăх тĕлĕшĕнчи ответлă задача пулса тăнине хакламан районсемпе ялсоветсен тата колхозсен руководителĕсене тÿрре кăларма нимĕнле сăлтав та çук.

Пирĕн республикăн тăваттăмĕш кварталта вăрман хатĕрлес енĕпе пысăк плана пурнăçа кĕртмелле. Çав плана пурнăça кĕртме вăхăта вăраха ямасăрах кирлĕ чухлĕ ĕç вăйĕпе туртăм вăйĕ мобилизацилес пулать. Унсăр пуçне тата çак уйăхăн малтанхи кунĕсенче туса çитермен ĕçсене пурнăçа кĕртме ĕç вăйĕ уйăрмалла. Вăрман хатĕрлевĕнче ĕçлеме ĕç вăйĕ мобилизацилессишĕн районсен руководителĕсем ответлă пулса тăраççĕ. ВКП(б) Обкомĕпе Чăваш АССР Совнаркомĕ. Оборонăн Государственный Комитечĕн заданине пурнăça кĕртес тĕлĕшпе уйрăмăнах Улатăр, Элĕк, Хĕрлĕ Чутай, Красноармейски тата Ишлей районĕсем начар ĕçленине палăртса, вĕсен руководителĕсене, вăрман хатĕрлемелли плана тултарас енĕпе сывăх вăхăтрах татăклă улшăнусем тумасан, çирĕп мерăсем йышăнасси пирки асăрхаттарса хăварчĕ. Çакă вăл республикăри пур районсене те асăрхаттарни пулать.

Вăрман хатĕрлевĕнче ĕçлеме ĕçпе туртăм вăйĕ çителĕклĕ таран мобилизацилени пе те ĕç пĕтмест-ха. Вăрманта ĕçлеме уйăрса янă çынсем валли условисем туса парас пулать, вĕсене пĕтĕм плана тултаричченех ĕçлеттермелле тăвас пулать.

Вăрмантан хăйсен ирĕкĕпе тухса каякансене çийĕнчех ответ тыттармалла. Çак енĕпе прокуратура органĕсен тимлĕн ĕçлемелле. Вăрмантан хăйсен ирĕкĕпе тухса каякансемпе пĕрле вĕсене пулăшакан работниксене те ответ тыттармалла тăвас пулать. Çакăн пек тума хушаççĕ вăрçăпа çĕршыв интересĕсем.

Вăрман хатĕрлекен организацисен ĕçлеме пыракансене йышăнма хатĕр пулмалла. Общежитисем, ĕç хатĕрĕсем кирлĕ чухлĕ пулччăр. Вăрмана пыракансене апатçимĕç продукчĕсем парса тăрассине лайăх йĕркелес пулать, вĕсене ĕçе тĕрĕс вырнаçтарса тухмалла. Кая юлса пыракан предприяти руководителĕсен, çавăн пекех тата Чăваш АССР Вăрман промышленность Халăх Комиссариачĕпе вăрман хуçалăх Управлени руководителĕсен ĕç тухăçлăхне ÿстерессине уйрăмах тимлĕн çавăрăнса пăхмалла. Вăрман хатĕрлевĕнчи кашни командирăн хăй оборона тĕлĕшĕнчен ответлă вырăнта ĕçленине яланах асра тытмалла.

Вăрман хатĕрлевĕ вăрçăпа хуçалăх ĕçĕнче пысăк вырăнта тăнине ĕççыннисене анлăн ăнлантарса парас пулать. Районра тухса тăракан хаçатсен вăрман хатĕрлевĕ мĕнле пынине тăтăшах çутатса тăмалла. Уйрăмах малта пыракансен опытне сарасси çине ытларах çавăрăнса пăхмалла. Ĕç фронтĕнчен таракансене çивĕччĕн питлес пулать.

Вăрманта ĕçлекенсем хушшинче политикăллă-массăллă ĕçе майлатни кирлĕ. Вăрман хатĕрлевĕнче ĕçлекенсене пĕрлештерсе тăракан профсоюз Обкомĕн, районсенчи парти организацийĕсем пулăшнипе, вăрманпункчĕсенчи клубсемпе хĕрлĕ кĕтессене йĕркеллĕ ĕçлекен тумалла. Кино, хаçат-журналсем, кĕнекесем, — çаксем пурте çителĕклĕ пулччăр.

Чугун çул валли вутă хатĕрлемелли иккĕмĕшпе виççĕмĕш кварталсенчи плана Кирери механизациленĕ вăрманпункчĕ, çавăн пекех тата Сĕнтĕрвăррипе Шупашкар районĕсем ăнăçлăн пурнăçа кĕртнĕ. Чурачăк районĕ те начар мар ĕçленĕ. Çак çитĕнĕве вĕсем ĕç вăйĕ мобилизацилессине тĕрĕс йĕркеленипе тата ĕç вăйĕ улшăнса тăрассине пĕтернипе тума пултарнă. Сĕнтĕрвăрри районĕнчен пынă кашни колхозник вăрманта Пăрачкав районĕнчен пынă колхозникрен виçĕ хут çурă нумайрах ĕçленĕ. Малта пыракан районсен опычĕпе ĕçлесе, вăрман хатĕрлемелли плана вăхăтра тултармалла, — çакă пулать ĕнтĕ вăрман хатĕрлекен организацисемпе республикăри районсен хальхи тапхăрти хисеплĕ тивĕçĕ.

Халĕ пирĕн республика вăрçăпа хуçалăх тĕлĕшĕнчи пысăк задачăсене — государствăна тырпул парас, авăн çапас, кĕрхи çĕртме тăвас ĕçсене пĕтĕмĕшпех пурнăçласси умĕнче тăрать. Çак ĕçсене пурнăça кĕртнипе пĕрлех, пирĕн вăрман хатĕрлемелли плана та ăнăçлăн тултармалла тăвас пулать. Пĕр ĕçе тунă чухне теприне манса хăварма юрамасть, пур ĕçе те вăхăтра пурнăça кĕртмелле.

Пирĕн Октябрь уявне ялхуçалăх çулне ăнăçлăн вĕçленипе тата вăрман хатĕрлевĕнче çĕнĕ çитĕнÿсем тунипе кĕтсе илме пур майсем те пур. Çав ĕçсене чыслăн пурнăçламалла та ĕнтĕ пирĕн.

Тăшман оборонине татни

ÇАПАÇУРИ ÇАР, октябрĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). Вента шывне карттăсем çинче фронт линийĕ тесе палăртнă. Çав шывăн леш енче—тăшманăн оборона тăрăхĕ. Унта мина хирĕсем, пралук картисем, йышлă траншейăсемпе окопсем, тупăсемпе миномётсен çĕршер батарейи вырнаçса ларнă. Гитлер дивизийĕсем хăйсен позицийĕсене хÿтĕлеме тĕплĕн хатĕрленнĕ. Вĕсем эпир наступлени тăвассине кĕтсе тăнă.

Анчах çапах та пирĕн наступлени вĕсемшĕн кĕтмен çĕртен пулнă. Пулеметчиксем, минометчиксем, стрелоксем тапранса каймалли вырăна пĕр сас-чĕвсĕр пухăннă. Тупăсен, танксене хирĕç пемелли пăшалсен расчечĕсем те çавăнтах пухăннă. Шыв хĕррине чи малтан гвардеец-саперсем çитнĕ. Вĕсем штурмламалли кĕперсем хатĕрленĕ. Мĕнпур боецсемпе офицерсем артиллери пеме пуçлассине кĕтнĕ. Акă вăл кĕрлесе янă. Артиллери кĕрлени вăрман шăплăхне пĕтерсе лартнă. Тупăсен сассисем çĕрпе сывлăша çурса чĕтретсе тăнă. Нимĕçсен позицийĕсем çине металл çумăрĕ чĕреслетсе çума пуçланă. Кашни батарея, кашни тупă малтанах картса хунă тĕллеве пенĕ. Малюков лейтенант батарейи темиçе хут персе ярсах тăшманăн сăнамалли пунктне, темиçе блиндажне тата пулемет площадкисене сирпĕнтерсе янă. Вут-çулăм хăвачĕ минутсеренех ÿссе пынă. Нимĕçсен укрепленийĕсем ишĕлеишĕле пынă. Акă сигнал паракан ракета çÿле хăпарса кайнă. Артиллеристсем тăшман оборонине шаларах пеме пуçланă. Совет гвардийĕ тăшмана штурмлама ыткăннă. Пирĕн подразделенисем пĕрин хыççăн тепри Вента шывĕ урлă каçнă та нимĕçсем вырнаçнă вырăна савăллапа-савăллана кĕрсе кайнă.

Тăшман траншейисенче алă вĕççĕн тата гранатăсемпе çапăçма пуçланă. Кĕтмен çĕртен тата вирлĕн штурмланине пула ĕç ăннă. Гитлеровецсем хăраса ÿкнĕ те каялла чакма пуçланă. Кăнтăрла тĕлне пирĕн тĕп вăйсем çапăçма пуçланă, вĕсем вара тăшманăн нумай шала каякан оборонине татнă. Тăшман хăйĕн позицийĕсене калама çук хаяррăн хÿтĕленĕ. Пирĕн боецсен кашни утăм çĕре çапăçса тытса илме тивнĕ. Гитлеровецсем совет чаçĕсене Вирвичная шывĕ патĕнче тытса чарма хăтланнă, анчах та вĕсен ку ĕçĕ те ăнман.

Хаяррăн çапăçса, пирĕн пехота çав шыв урлă каçнă та тăшманăн укрепленийĕсене çĕнтернĕ, унăн икĕ пин салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă.

Маневр туни тата вирлĕн тапăнни пирĕн пур йышши çарсен ĕçĕсенче те палăрса тăнă. Тăшманăн пĕр-пĕринчен уйăрăлса кайнă ушкăнĕсене çавăра-çавăра илсе, унăн çирĕплетнĕ пункчĕсене пĕтерсе пырса, пирĕн чаçсем кунне 20—25-шер километр малалла кайса пынă. Тăватă кун хушши çапăçса, Балтика тăрăхĕнчи 1-мĕш фронт çарĕсем, Белоруссири 3-мĕш фронт çарĕсем пулăшнипе, 100 километр таран малалла кайнă, татнă вырăна 280 километр таран сарнă, нимĕç оборонин çирĕплетнĕ темиçе паха пунктне, чугун çул станцийĕсене тата халăх пурăнакан 2.000 пункта ытла тытса илнĕ.

Пирĕн боецсен вак ушкăнĕсем хастарлăн та пĕлсе кĕрешнĕ. Кострыгин кĕçĕн сержантăн отделенийĕ наступлени тăвакан подразделенире малта пынă. Тăшман патне çывхарса пынă чухне пирĕн боецсем тăшманăн пралук картине тĕл пулнă. Боецсем хăмасем, туратсем, шинельсем хурса часах каçă тунă та çав пралук карти урлă каçса кайнă. Çав вырăнтан леререх—юханшыв. Нимĕçсем çав шыв çинчи кĕпере сирпĕнтерсе яма хатĕрленнĕ. Кострыгин отделенийĕ хăйĕн ĕçне нимĕçсенчен маларах тунă. Вăл сасартăк пырса çапнă та çав кĕпере тытса илнĕ, çапла вара пĕтĕм подразделение юханшывăн тепĕр енне пĕр чăрмавсăр каçса кайма май панă.

Шауляй хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем Шауляй хулипе Тильзит хули хушшинчи шоссе çулне татнă, тăшманăн çирĕплетнĕ пысăк пункчĕ патне пырса çитнĕ. Çав пункт тавра ларакан çÿллĕ вырăнсем çинче нимĕçсем хăватлă укрепленисем туса хунă, унта пемелли хатĕрсем нумай вырнаçтарса лартнă. Пĕр чаçăн гвардеецĕсем тăшман рубежĕнчен айккипе иртсе кайнă та тăшмана пĕр вăхăтрах флангсенчен те, тылран та пырса çапнă, çав рубежа тытса илнĕ.

Хĕрлĕ Çар чаçĕсем çаплах наступлени туса пыраççĕ. Çапăçусем çивĕчленнĕçемĕн çивĕчленсе пыраççĕ. Нимĕçсем çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен пысăк çухату тÿсеççĕ.

В. МЕДВЕДЕВ.

Черчилль господин калани

[illegible]

Государствăн Иккĕмĕш Военнăй Заемĕн иккĕмĕш тиражĕ

АЛМА-АТА, октябрĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). [illegible]

ХАЛАХ ВАЛЛИ ПИР-АВАР ЫТЛАРАХ ТĔРТСЕ КĂЛАРМА ПУÇЛАÇÇĔ

[illegible]

Планран ирттерсе Хĕрлĕ Çар фондне çĕршер те пиншер пăт тырă парса, хамăр государствăн оборона вăй-хăватне тĕреклетĕр!

Хĕрлĕ Çар фондне тырă параççĕ

ИШЛЕЙ, октябрĕн 10-мĕшĕ. (ТЕЛЕФОНПА). Районри колхозсенчен пĕлтернĕ тăрăх, Хĕрлĕ Çар фончĕ валли планран ирттерсе государствăна 7.000 пăт тырă пама йышăннă. Кашни колхозрах пухусем пулса иртеççĕ, вĕсенче Шупашкар районĕнчи колхоз председателĕсем чĕнсе калавне сӳтсе-яваççĕ. «Красный воин» колхоз — 90 пăт, «Парижская Коммуна» колхоз — 120 пăт, «Ырашпулăх» колхоз— 120 пăт, Калинин ячĕпе тăракан колхоз 90 пăт тырă пама йышăннă. Ытти колхозсем те планран ирттерсе параççĕ. Халĕ çак тырра хатĕрлев пункчĕсене турттарма тытăнчĕç.

* * *

СЕНТЕР, октябрĕн 10-мĕшĕ. (ТЕЛЕФОНПА). Тулли мар даннăйсем тăрăх, районри колхозсем Хĕрлĕ Çар фончĕ валли государствăна планран ирттерсе 8.000 пăт тырă пама йышăннă.

Ĕнепе тырă турттарать

ЕЛЧĔК. Çĕнĕ Пăвари «Сатурн» колхозра 72 çулхи ватă колхозник Д. Купташкин юлташ çак кунсенче хăй ĕнине кӳлме вĕрентрĕ. Икĕ кун хушшинче вăл хирти итемрен колхоз кĕлетне 56,78 центнер тырă турттарчĕ. Уншăн вăл 52 ĕçкунĕ илчĕ, кунсăр пуçне ăна тата 23 килограмм тырă парса премилерĕç. Вăл хăй ĕнипе [illegible]

М. ЕГОРОВ.

Йышăннă та... маннă

[illegible] председательне витесене 5 кун хушшинче юсама хушса постановлени йышăннă пулнă.

— Юсанă-и? — ыйтрăмăр эпир старши зоотехникран.

— Çук, юсаман, — терĕ вăл.

— Итлеменшĕн мĕн турăр?

— Нимĕн те туман.

Çĕнĕ витесем тăвас ĕç те çавăн пекех япăх пырать.

План тăрăх районри 14 колхозра çĕнĕ витесем тумалла пулнă, анчах нумай çĕрте çав ĕçе пуçăнман та («Комбайн», «Красный Водник», «8-ое марта» т. ыт. те), е пуçăннă çĕрте те çиелтен, ятне тăвас тенĕ пек çеç ĕçлеççĕ.

В. РЗАЙ, (Хамăр корр.).

Ĕç çине çиелтен пăхмалла мар

ЧУРАЧĂК. «Социалистический путь» колхозра икĕ бригада. Вĕсем иккĕшĕ те ăмăртса ĕçлеççĕ. Пĕрремĕш бригадăн бригадирĕ Федорова юлташ пĕтĕм ĕçе тĕплĕн тăвать. Çавăнпа унăн бригади ялхуçалăх ĕçĕсене яланах маларах ĕлкĕртсе пырать. Ĕçĕн пахалăхĕ те çак бригадăра лайăх.

Иккĕмĕш бригадăн бригадирĕ Никитин юлташ, виçĕ çул бригадирта ĕçлет пулсан та, ĕçе тĕплĕн тумасть. Акă, сăмахран, вăрлăхлăх хăварнă клевера çулнă та капана хывман. Вăл уйрах сапаланса выртать. Никитин бригади кĕлтесене капана хывса пĕтернĕ. Анчах та паянхи кунччен те уйра виçĕ сĕлĕ сурачĕ çумăр айĕнчех лараççĕ. Бригадир çавна пĕлет, анчах нимĕн те тумасть.

Г. ИГНАТЬЕВ.

Тракторсене юсама тытăннă

ШАХАСАН. Çак кунсенче МТС-ри коммунистсен усă пухăвĕ пулса иртрĕ. Пухура коммунистсемпе пĕрлех комсомолецсем тата партире тăман трактористсем те пулчĕç. Пуху хĕле хатĕрленесси тата тракторсемпе ялхуçалăх машинисене юсасси çинчен сӳтсе-яврĕ.

Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнса, трактористсемпе тракторискăсем тракторсемпе ялхуçалăх машинисене Октябрь уявĕ тĕлне 50 процентран кая мар юсаса çитерме обязательство илчĕç.

Илнĕ обязательствăсене нумайĕшĕсем ăнăçлăн пурнăçласа пыраççĕ. Тимофеев, Сергеев тата Чернов бригадисем икшер трактор юсаса пĕтерчĕç, ытти бригадăсенче те тракторсемпе сеялкăсене, культиваторсене юсама тытăнчĕç.

Машинăсем юсанă çĕрте ĕçлекен трактористсем валли пĕрлешӳллĕ столовăй организациленĕ. Çавăн пекех вĕсене пурăнмалли общежитие юсаса хатĕрленĕ.

МТС-н общежитийĕсем валли вутă хатĕрлеме ятарласа бригада тунă. Вăл паянхи кун тĕлне 60 кубометр вутă хатĕрлесе хунă та ĕнтĕ.

А. АНТОНОВ.

Вылăхсене хĕл каçарма тĕплĕн хатĕрленмелле

ÇĔРПӲ. Хĕллехи сивĕ кунсем çывхараççĕ. Колхозсенчи обществăллă вылăхчĕрлĕхе лайăх хĕл каçарас тесен, витесемпе ферма çурчĕсем ăшă та таса пулмалла. Районри малта пыракан колхозсем, çакна ăнланса илсе, паянхи кун тĕлне вылăхсене хĕл каçарма лайăх хатĕрлесе çитнĕ. Уйрăмах пирĕн районра çамрăк вылăхсен витисемпе ферма çурчĕсене лайăх хатĕрлеççĕ. Çак колхозсен шутне «Ĕмĕт», «Пионер» тата ытти колхозсем те кĕреççĕ.

Çав вăхăтрах вылăхсене хĕл каçарма хатĕрленес тĕлĕшпе ытла та япăх ĕçлекен колхозсем те пур-ха. Акă «Красные Тиуши» колхозах илер (колхоз председателĕ Прокопьев, ферма заведующийĕ Соловьева). Çак колхоз хĕле хатĕрленес тĕлĕшпе паянхи куна çитсе нимĕн те туман, витесене юсама тытăнман, шуратман тата ытти те. Çавăн пекех «13 лет Октября» колхозра та хĕле хатĕрленмеççĕ. Кунта кăçал ĕне вити туса лартрĕç, анчах та унăн тăррине витмерĕç. Вите çумăр айĕнчех шӳсе ларать. Çавăн пекех 22 лаша вырнаçакан витене юсамалла, 20 лаша вырнаçмалăх çĕнĕ вите тата пăру вити тумалла. Çак ĕçсене тума тытăнман. Витесене юсама тата çĕнĕрен тума кирлĕ материалсем те, ĕç вăйĕ те çителĕклĕ. Колхоз председателĕн Клементьев юлташăн ĕçе организацилеме пĕлни çитмест.

Ăшă витесемпе ферма çурчĕсене хатĕрленипе пĕрлех, вылăхсем валли çителĕклĕ таран апат пухса хумалла. Кăçал вылăх апачĕ нумай тесе нимĕнле контрольсĕр расходламалла мар. Уйрăм колхозсенче вылăх апатне хураллассине организацилемен-ха. Çавăн пирки «Кульмет» колхозра 4 капан утта çунтарса янă.

Н. СЕРГЕЕВ.

Ку йĕркесĕрлĕхсем камран килеççĕ-ши?

Чурачăк районĕнчи «Молодая сила» [illegible]

паретпĕр. Колхозниксемпе колхозницăсем [illegible]

75 пуç, хурсем 65 пуç ытларах. Вылăх валли апат çителĕклĕ хатĕрленĕ. Анчах та силос хывмалли плана тултарайман-ха. Халĕ купăста тата чĕкĕнтĕр пухма тытăнаççĕ, вĕсен çулçисене пĕтĕмпех силос тунă çĕре яраççĕ, çапла вара силос хывмалли плана тултарма та пур майсем те çителĕклĕ.

Тырă кăçал ăнса пулчĕ, ĕçкунĕ тăрăх колхозниксене çителĕклĕ таранах валеççе [illegible]

Вăрмар станцине 30 çухрăма турттарма тиврĕ. 48 лава Михайловка разъездĕнчен каялла тавăрчĕç. Арман авăртнăшăн илекен шайкка çăнăхне те Вăрмарах яма тивет. Çак йĕркесĕрлĕхсем пире кӳрентереççĕ.

Çапла каласа пачĕ колхоз председателĕ. Çакна район руководителĕсен шута илмелле те йĕркесĕрлĕхсене пĕтермелле.

В. АКЧЕЛЬ.

Хĕрарăмсем пур ĕçре те лайăх ĕçлеççĕ

СЕНТЕР. Войков ячĕпе тăракан колхозри тĕп ĕçсенче хĕрарăмсем ĕçлеççĕ. Çак колхоз районра кая юлса пыракан колхоз пулнă. Кăçал вăл сентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне пĕтĕм тырпула вырса пĕтерчĕ, сентябрĕн 20-мĕшĕччен кĕлте турттарса капана хыврĕ, паянхи куна 193 гектар çинчи тырпула çапса пуçтарнă, государство умĕнчи парăмсене татнă. Кĕрхи тырăсене, 85 гектар, агротехника кăтартнă срокра акса хăварнă. Калчасем тикĕс шăтса тухрĕç. Çак хĕрӳ кунсенче пур колхозниксем те ĕçе хастарлăн хутшăнаççĕ.

— Паян-ыран авăн çапса пĕтеретпĕр,— теççĕ колхозниксем.

Хĕрарăмсем кунта — чăннипех те пысăк вăй. А. Бархаткина, А. Яргунькина, Х. Петрова М. Романова, Е. Моторкина, В. Бархаткина, К. Орлова, 60 çултан иртнĕ К. Шишкина колхозницăсем тырă вырнă çĕрте нормăна 150—160 процент тултарса ĕçлерĕç.

2-мĕш бригада пуринчен малта пырать. Ку бригадăна Отечественнăй вăрçă инвалиĕ Тарасов юлташ ертсе пырать. Вăл, фронтра пулса курнăскер, вăрçă вăхăтĕнче мĕнле ĕçлемеллине лайăх пĕлет. Колхозра паянхи куна 93 гектар кĕрхи çĕртме тунă.

Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнса, колхозниксемпе колхозницăсем октябрĕн 6-мĕшĕ тĕлне авăн çапса, октябрĕн 10-мĕшĕ тĕлне çĕртме туса пĕтерме, вылăх-чĕрлĕх çуртйĕрĕсене октябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне юсаса çитерме сăмах пачĕç.

П. ФРОЛОВ.
С. ШУЛГАЕВ.

Ялхуçалăхĕ валли çĕнĕ кадрсем

Вăрнарти ялхуçалăх вăтам шкулĕнчен кăçал 48 агроном вĕренсе тухрĕç. Вĕсенчен экзамена 10 çын питĕ лайăх, 20 çын лайăх тытнă. Вĕренсе тухнисенчен Хумаров, Лукин, Данилова тата ыттисем те фашистла нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă районсене ĕçлеме кайма кăмăл турĕç.

З. КУДРЯШОВА.

Районри хаçатсене пăхса тухни

Районри хаçат тырпул хатĕрлес ĕçе мĕнле пулăшать

Елчĕк районĕнчи «Колхоз ялавĕ» хаçатра «Транспорт бригади лайăх ĕçлет», «Государствăна тырă леçетпĕр», «Государствăна тырă парса татрăмăр», «Мĕнпур парăмсене парса татнă» текен заметкăсене тăтăшах тĕл пулатăн. Хаçат тăрăх пăхсан, ку районра государствăна тырă парас ĕç ăнăçлă пырать тесе шутлама пулать. Анчах Елчĕк районĕ государство умĕнчи пĕрремĕш тивĕçе пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе республикăра кая юлса пыракан районсен ретĕнче тăрать. Вăл хăйĕн начар ĕçĕпе пĕтĕм республикăна та каялла туртать. Çакă иккĕлентерет те ĕнтĕ районри хаçатăн ĕçĕ пирки.

Районри колхозсем тырă вырма республикăра пуринчен маларах, июлĕн 15—17-мĕшĕсенче, тухнă. «Колхоз ялавĕ» хаçат колхозсем ыраш вырма массăллăн тухни çинчен июлĕн 20-мĕшĕнчи номерте пĕлтернĕ. Тепĕр çичĕ кунтан, июлĕн 27-мĕшĕнче, хаçат «Уборка ĕçне вăйлатар» ятлă умстатья панă, унта районри колхозсем пĕтĕмпе 2500 гектар ыраш вырни çинчен каланă, СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ йышăннă постановлени çинчен те асăнса хăварнă. Анчах... хаçат колхозсен пĕрремĕш тивĕçĕ çинчен — государствăна тырă парасси çинчен пĕр сăмах та шарламан.

Партипе правительство кăтартса панă тăрăх, колхозсен тырă вырма тухнă хыççăн 5 кунтан авăн çапма тытăнмалла, уборкăн малтанхи кунĕсенчен пуçласах государствăн хатĕрлев пункчĕсене тĕштырă турттарассине организацилемелле пулнă. Малта пыракан колхозсем ĕçе çавăн пек организациленĕ те ĕнтĕ. Анчах «Колхоз ялавĕ» хаçат июлĕн 27-мĕшĕнче те, июлĕн 30-мĕшĕнче те, урăхла каласан, тырра массăллăн вырма пуçлани 10—12 кун иртсен те, çав ĕç пирки пĕр сăмах та хускатман.

Çапла вара хаçат, колхозниксен коллективлă организаторĕ пулас вырăнне, малтан пуçласах пĕтĕм халăхăн вăрçăпа [illegible]

рапла шап уйăх иртсен тин, хаçат Кивĕ Эйпеçри «Красный партизан» колхоз государствăна 105 центнер тырă пани çинчен, Лаш Таяпари Крупская ячĕпе тăракан колхозри транспорт бригади лайăх ĕçлени çинчен çырнă заметкăсене пичетлесе кăларать. Çав номертех «Хĕрлĕ Ялавлă колхозра» ятлă пысăк подвал тухать. Ăна Аслă Пăла Тимешри Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз çинчен çырнă. Ку материалсем япăх тесе каламăпăр. Анчах çак çӳлте асăннă виçĕ колхозпа тепĕр 5—6 колхозăн ячĕсене хаçат малашне номертен номерех асăнма тытăнать. «Марс», «Осоавиахим», «Ново-Ищеряково», «Красный партизан», Ворошилов, Ленин, Крупская ячĕсемпе тăракан колхозсене асăнмасăр пĕр номер те иртмест. Хăшпĕр ятсене пĕр номертех ик-виçĕ хут асăнаççĕ. Сăмахран, августăн 24-мĕшĕнчи номерте «Осоавиахим» колхозăн ятне «Государствăна тырă леçетпĕр», «Вăкăрсемпе анлăн усă кураççĕ», «Тухăçлă кок-сагыз туса илчĕç» ятлă виçĕ заметкăра тĕл пулатăн, çитменнине çав заметкăсем виççĕшĕ те юнашарах лараççĕ.

Уйрăмах малта пыракан «Марс» тата Ворошилов ячĕпе тăракан колхозсен ячĕсене вара редакци пĕр номертен те сиктерсе хăвармасть. Чăн та, малта пыракансен опытне кăтартса пани кирлĕ, анчах малта пыракансен ячĕпе кая юлнисене витме тытăнсан, ку вара ĕçе усă мар, сиен кăна кӳрет.

Çавăнпа та ĕнтĕ «Колхоз ялавĕ» хаçат тăрăх пăхсан, Елчĕк районĕнчи ĕçсем лайăх пек курăнаççĕ, тĕрĕссипе ку район юлса пырать. Çапла хаçат район пурнăçне тĕрĕс мар çутатса парать. Елчĕк районĕнче 56 колхоз. Пĕтĕм район ĕçĕн ăнăçлăхне, паллах, 5—6 колхоз лайăх ĕçлени мар, мĕнпур колхозсем лайăх ĕçлени татса парать. Районра авăн çапас тата государствăна тырă парас ĕçре колхозсен ытларахăш пайĕ юлса пырать. Çавăнпа та хаçатăн, малта пыраканнисен опытне çутатса панипе пĕрлех, кая юлнă колхозсем çине ытларах çавăрăнса пăхмалла, малта пыраканнисем енчен çав колхозсене пулăшу парас ыйтăва çивĕччĕнрех лартмалла. Анчах хаçат кун пирки нимĕн те шарламасть, вăл çак ĕçре колхозсене пачах пулăшмасть, сӳрĕк ĕçлекен колхоз руководителĕсене критиклемест. Тырă вырас ĕç пуçланнăранпа хаçат критикăллă материалсем пĕтĕмпе те виççĕ кăна панă. Вĕсем— «Ĕçе япăхтарнă колхозра», «Красные Темяши» колхоз мĕншĕн юлса пырать?», «Шаурбин ответлăха туймасть» ятлă материалсем.

«Колхоз ялавĕ» хаçатăн ĕçĕнчи пысăк çитменлĕхсем редакци хăй тавра ялкорсен активне çителĕксĕр пĕтĕçтернинчен те нумай килеççĕ. Хаçатра час-часах тата пĕр номертех «И. П.», «И. Петров», «И. П-ов» тесе алă пуснисене тĕл пулма пулать. Çакă вăл, паллах, хаçата пĕрре те илемлетмест.

Партин Елчĕк райкомĕ те хăйĕн хаçачĕ çине кирлĕ пек çавăрăнса пăхмасть. Вăрçăпа хуçалăх тĕлĕшĕнчи чи паха задачăна — государствăна вăхăтра тырă парса татас задачăна пурнăçа кĕртес енĕпе «Колхоз ялавĕ» хаçат çителĕксĕр ĕçленине урăх нимĕнпе те ăнлантарса пама çук.

Хаçатăн ĕçне организацилеме пĕлсен, вăл пысăк вăй пулса тăрать. Райкомăн çав вăйпа хăйĕн ĕçĕнче усă курма пĕлмелле, районри хаçатăн ĕçне лайăхлатмалла.

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, октябрĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ паян пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

Шельда шывĕн вăрри районĕнче союзниксен çарĕсем малалла куçса пынă. Антверпен хулинчен çурçĕртерехре Кемтхауте хулине ирĕке кăларнă. Шельда шывĕ вăрринчен кăнтăртарахра Леопольд каналĕн леш енчи укрепленисем çинче хаяр çапăçусем пуçланса кайнă. Союзниксен çарĕсем Голландире савăлланса кĕнĕ районăн хĕвеланăç енчи участокĕнче тĕллĕнтĕллĕн çапăçнă. Союзниксен çарĕсем Аахен хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре унтан тухса каймалли тăрăха 4 миля таран ансăрлатнă. Çурçĕр енчен наступлени туса пыракан чăссем Осбен хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре пĕр мильăна яхăн малалла кайнă. Альсдорф хулинчен пĕр миля çурă çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре союзниксем Ойдтвейлер хулине тытса илнĕ. Аахен хули районĕнче пур çĕрте те тăшман артиллерипе, пăшалсемпе тата пулеметсемпе вăйлăн персе тăрать.

Гюрриген хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре союзниксен çарĕсем çӳреме йывăр вырăнта çĕнĕрен наступлени пуçласа янă.

Мец хули районĕнче союзниксен çарĕсен чăсĕсем Мезьер-ле-Мец хулин çурçĕр енчи çуррине тăшмантан тасатнă. Дриан фортĕнче хаяр çапăçусем пыраççĕ. Союзниксен Нанси хулинчен çурçĕртерехре тата çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре наступлени туса пыракан çарĕсем Муаврон хулипе Шеникур хулине ирĕке кăларнă. Вогез тăвĕсем патĕнче темиçе çынна тыткăна илнĕ тата Ле-Тилло патĕнче çĕнĕ участоксем тытса илнĕ.

Союзниксен авиацийĕ тăшманăн Хĕвеланăç Германири пĕр çĕре пухăнса тăнă çарĕсене, артиллери позицийĕсене тата чугун çул объекчĕсене тапаннă.

Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, октябрĕн 7-мĕшĕнче, икĕ пысăк бомба тивнипе, Рейн çинчи Кембс патĕнчи пĕве ишĕлнĕ. Çав тĕлте вара Рейн шывĕ пароходсемпе çӳреме юрăхсăр пулса тăнă.

ЛОНДОН, октябрĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс тăврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ паян пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă: Италире нумай вăхăт хушши вăйлă çумăр çуса тăнă пирки фронтăн пĕтĕм талккăшĕнче пысăк ĕçсем тума май пулман. Çанталăк начар тăнă пулин те, 8-мĕш армин чăсĕсем Монте-Фарнето тӳпемĕ çинче тăшманăн вăйлă контратакисене сирсе янă, Фимусино шывĕ патĕнчен тата малалла кайнă, тăшмана Монтилгалло тата Монте-Гаттона тӳпемĕсем çинчен хĕссе кăларнă. 5-мĕш армири американецсен чăсĕсем тăшмана Барбароло хулинчен тата Монте Кастелази тӳпемĕ çинчен хăваласа янă та Болонья хулине каякан шоссе тăрăх икĕ мильăна яхăн малалла куçнă. Фронтăн ытти участокĕсенче паллă улшăнусем пулман.

Çанталăк начар тăнă пирки авиаци вăйлă кĕрешеймен.

Грецин Коринф перешеекĕнчен 30 миля кăнтăртарахра ларакан Навплион портĕнчи гарнизон союзниксене парăннă. Союзниксен çарĕсем Пелопоннес çурутравне Греци материкĕнчен уйăрса тăракан Коринф заливĕ хĕрринчи Коринф хули патне çывхарса пыраççĕ. (ТАСС).

Америка самолечĕсем Германири вăрçă объекчĕсене тапанни

ЛОНДОН, октябрĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй пĕлтернĕ тăрăх, Американ [illegible] бомбардировщиксене йышлă истребительсем хӳтĕлесе пынă.

[illegible]

Финляндири лару-тăру çинчен

СТОКГОЛЬМ, октябрĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). «Соумен сосиалидемокраатти» хаçат [illegible]

Австрири пăлхавсем

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). «Нью-Йорк таймс» хаçат [illegible] не çĕнĕрен 10 процент чакарнă хыççăн тухса кайнă. Çав пăлхавсем вăхăтĕнче 60 çынна вĕлернĕ, темиçе çĕр çынна амантнă тата тытса хупнă. Венăри хăшпĕр районсенче вырăнти халăхпа гестапăн чи лайăх чăсĕсем пĕр-пĕринпе темиçе кун хушшинче тытăçа-тытăçа илнĕ. Çакăн пек калаççĕ: Вена хулин кăнтăр-хĕвелтухăç районĕсенче, çавăн пекех тата Штирире забастовка тăвакан рабочисем нимĕçсен темиçе чăсне çĕмĕрсе тăкнă, пысăк çухатусем кӳнĕ. Нимĕçсем Венăри халăха—çынсем пурăнакан кварталсем çине бомбăсем пăрахатпăр, тесе хăратнă. Хула бургомистрĕ пулнăскерне тытса хупнă. Нимĕçсем ăна тата ытти заложниксене те пăлхавсем чарăнмасан персе пăрахатпăр, тесе хăратаççĕ.

Германире офицерсем çĕнĕрен пăлхав туни çинчен калакан хыпар

ЛОНДОН, октябрĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин корреспонденчĕ Стокгольмран пĕлтернĕ тăрăх, паян Швецин «Стокгольмс тиднинген» хаçачĕ Германире офицерсем Гитлера хирĕç тепĕр пăлхав тунă текен хыпар сарăлни çинчен статья пичетлесе кăларнă.

КĔРЕШЕКЕН ИНТЕЛЛИГЕНЦИН ПРЕДСТАВИТЕЛĔСЕМ ФРАНКОНА СИРПĔТМЕ ЧĔННИ

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). «П. М» хаçатăн Парижри корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: Испанин республикăшăн кĕрешекен паллă художникĕсен, писателĕсен тата учителĕсен ушкăнĕ эмиграцире, Франкона сирпĕтме чĕнсе, манифест пичетлесе кăларнă. Манифестра çапла каланă: «Испани халĕ хăй валли çĕнĕрен ирĕклĕх çапăçса илме нихçанхинчен те ытларах тăрăшать. Испанец ятне илме тивĕçлĕ кашни çынăн пирĕн хыççăн пымалла. Испанишĕн, ирĕклĕхшĕн, демократишĕн, малалла».

ЯПОНИ ÇАРĔСЕМ ФУЧЖОУ ХУЛИ РАЙОННЕ АННĂ

ЧУНЦИН, октябрĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Сентрал-Ньюс агентстви Китай командованийĕн сводкине панă. Унта çапла каланă: сентябрĕн 7-мĕшĕнче ирхине Япони суднисем Миньцзян шывĕн вăррине кĕнĕ. Вĕсем Китайăн кăнтăр-хĕвелтухăç çыранĕнчи Фучжоу порчĕ районне анма пуçланă, утлă çар чăсĕсене хӳтĕлесе персе тăнă. Сентябрĕн 28-мĕшĕнче каçхине çав районра аннă японецсем хĕвеланăçнелле куçма тытăннă. Çапăçусем Фучжоу хулинчен 10 километрта пыраççĕ.

САМОЛЕТ-СНАРЯДСЕМ АНГЛИ ÇИНЧЕ

ЛОНДОН, октябрĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, октябрĕн 5-мĕшĕнче каçхине Кăнтăр Англи çыранĕсем тĕлне çурçĕр-хĕвелтухăç енчен самолет-снарядсем вĕçсе пынă. Çыранри оборона артиллерийĕ хаяррăн пеме тытăннă. Тапăнура нимĕçсен «Хейнкель» йышши темиçе самолечĕ пулнă. Вĕсем самолет-снарядсене кăкарса турттарса пынă, вара пурне те пĕр вăхăтрах вĕçерсе янă. Атака темиçе минут хушши пынă. Пĕр самолет-снаряд Лондон урамне ӳкнĕ те темиçе çурта ишсе антарнă.

АРАБСЕМ ПУРĂНАКАН ÇĔРШЫВСЕН АЛЕКСАНДРИЯ ХУЛИНЧИ КОНФЕРЕНЦИЙĔ

ЛОНДОН, октябрĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, сентябрĕн 26-мĕшĕнче Александрия хулинче арабсем пурăнакан çĕршывсен союзне тăвас ыйтупа материалсем хатĕрлекен комитетăн конференцийĕ уçăлнă. Вăл «Арабсен никама пăхăнман çĕршывĕсен лигине» тума йышăннă.

Египет, Ирак, Сири, Ливан тата Трансиордани представителĕсем арабсен никама пăхăнман государствисенчен Арабсен çĕршывĕсен лигине тăвасси çинчен протокол çырса алă пуснă. Çав Лигăн членĕсем пулса тăракан мĕнпур çĕршывсем Лига советне пурте пĕртан шутланса представительсем яраççĕ.

Малта пыракан ялсоветсен опычĕ

Вырăнти советсем вăрçă çулĕсенче тылри ĕççыннисене вăрçăпа хуçалăх тĕлĕшĕнчи задачăсене пурнăçлама мобилизацилес енĕпе сахал мар ĕçлерĕç. Вĕсен пархатарлă ĕçĕ халăх хуçалăхĕн пур отраслĕсенче те усăнах палăрса тăрать.

Нумаях пулмасть Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн Президиумĕ Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Ольтикасси, Çĕрпӳ районĕнчи Вĕрмер, Чурачăк районĕнчи Янчеллă ялсовечĕсен ĕçĕсем çинчен çав ялсовет председателĕсен Матвеев, Елисеева тата Львов юлташсен доклачĕсене сӳтсе-яврĕ. Мĕнле ĕçлеççĕ-ха вĕсем? Верховнăй Совет Президиумĕ асăннă ялсоветсем вăрçă вăхăтĕнче хăйсен ĕçне тĕпренех çĕнетсе лайăхлатнине палăртнă.

Ольтикасси, Вĕрмер, Янчеллă ялсовечĕсем юлашки вăхăтра хăйсен территорине кĕрекен колхозсене ертсе пырассине вăйлатнă. Çавна пула вара колхозсем ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн пурнăça кĕртсе пыраççĕ.

Акă, Янчеллă ялсовечĕн ĕçне тишкĕрсе тухар. Унта ялсовет исполкомĕн ларăвĕсене яланах план тăрăх туса ирттернĕ. Ларусенче хуçалăхри тата колхоз хресченĕсен пурнăçĕнчи нумай тĕрлĕ ыйтусене сӳтсе-явнă, йышăннă решенисене мĕнле пурнăça кĕртнине тăтăшах тĕрĕслесе пынă. Çакă вăл ĕç дисциплинине çирĕплетме, пур ĕçре те большевикла йĕркелĕх тума май панă. Ялсовет территорине кĕрекен колхозсенче ĕçкунĕсен минимумне тултарман колхозниксем чылай çулсем хушши çук ĕнтĕ.

Янчеллă ялсоветне пурĕ 7 колхоз кĕрет. Ялсовет исполкомĕ тĕрĕс ертсе пынипе пула тата колхозниксемпе колхозницăсем хастарлăн ĕçленине пула, çав колхозсем кăçалхи ялхуçалăх ĕçĕсене вăхăтра та ăнăçлăн пурнăça кĕртсе пыраççĕ. Çуракине срокра туса ирттернĕ. Тырпулсене пухса кĕртес ĕç те ăнăçлăн пырать. Ялсоветри «Большевик» колхоз сентябрĕн 9-мĕшĕ тĕлнех тырă вырса, авăн çапса пĕтернĕ. «Победа» колхозра кĕрхи тата сурхи тырăсене августăн 23-мĕшĕ тĕлне вырса пуçтарнă. Нумай колхозниксем ĕçкунĕсем сахал мар тунă. Çапла «Прогресс» колхозри С. Игнатьева юлташ 400 ĕçкунĕ, фронтовик арăмĕ, икĕ ача амăшĕ М. Васильева юлташ 209 ĕçкунĕ тунă. «Новая сила» колхозри колхозницăсем Васильева, Афанасьева, Захарова юлташсем нормăна 200-шер процент ытла тултарса пынă.

Ялсовет исполкомĕ государство умĕнчи обязательствăсене тултарасси çине тимлĕн çавăрăнса пăхать. Çак ĕçе вăхăтра пурнăçлассишĕн кĕрешме активистсене, депутатсене анлăн явăçтарнă. Ялсоветра государствăн Виççĕмĕш Военнăй Заемне 376.350 тенкĕлĕх çырăнса, укçине çийĕнчех хывнă. Государствăна сĕт-çу, аш-какай памалли плансене те вăхăтра тултарса пыраççĕ. Аш-какай памалли плана 1945 çулшăн та тултарнă ĕнтĕ.

Ялсоветри колхозсем, хăйсем ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн пурнăça кĕртсе пынипе пĕрлех, Шăмăршă районĕнчи колхозсене туртăм вăйĕ парса пулăшнă.

Вĕрмер ялсоветĕнчи колхозсем те начар мар ĕçлеççĕ. Унта 5 колхоз. Ялсовет председателĕ Елисеева юлташ, исполкомăн ĕçне пĕтĕмпех ялхуçалăх çулне ăнăçлăн вĕçлемелле тăвас тата государство умĕнчи парăмсене вăхăтра парса татмалла тăвас тесе организацилеме тăрăшать. Колхозсен ĕçĕнче çитменлĕхсем палăрсан, вĕсене пĕтерме вăл çийĕнчех мерăсем йышăнать. Пĕр вăхăтра ялсоветри «Планета» колхоз кая юлса пынă. Çав колхозăн ĕçĕсем çинчен ялсовет исполкомĕн ларăвĕнче сӳтсе-явса, унăн ĕçне лайăхлатма конкретлă мероприятисем йышăннă. Çав мероприятисене пурнăça кĕртни колхоз ĕçне кĕске вăхăтрах лайăхлатма май панă.

Ялсовет руководителĕсем хăйсен пĕтĕм ĕçне актив çине таянса туса пыраççĕ. Ялсовет активĕнче 23 çын тăрать. Вĕсем хушшинче бригадирсем, медицина работникĕсем, учительсемпе ялти çамрăксем пур. Вĕсем хăйсене çирĕплетсе панă участоксенче культурăллă-массăллă ĕçе туса пыраççĕ, стена хаçачĕсем кăлараççĕ. Çапла, «Нива» колхозри колхозница А. Краснова юлташ кулленех колхозниксене хаçат-журналсем вуласа парать. Вăл хăй те суха тунă çĕрте ĕçлесе нормăна 210 процент ытла тултарса пынă. Ун пек примерсене татах та нумай илсе кăтартма пулать.

Ялсовет исполкомĕ укçа-тенкĕ пухас, государство умĕнчи обязательствăсене пурнăçа кĕртес енĕпе кулленех тимлĕн ĕçлет. Ялсоветри колхозсем государствăна тырă памалли плана тултарса çитернĕ ĕнтĕ.

Ольтикасси ялсоветĕнчи колхозсем те ĕçре лайăх тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Ку ĕнтĕ, чи малтанах, ялсовет исполкомĕ хуçалăх тата культурăпа политика ĕçĕсене пурнăça кĕртес тесе кулленех тимлĕн ĕçленинчен килет. Ялсовет председателĕ Матвеев юлташ вырăнти влаçăн чăн-чăн руководителĕ пулса тăрать. Вăл ертсе пынипе ялсовет çумĕнчи яланлăх комиссисем хăйсен ĕçне начар мар организациленĕ. Вĕсем колхозсене хуçалăх ыйтăвĕсене татса пама тата колхозниксем хушшинче массăллă-политикăллă ĕçе йĕркелеме пулăшаççĕ.

Ялсоветри колхозсем, ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн пурнăça кĕртсе пынипе пĕрлех, государство умĕнчи обязательствăсене те вăхăтра татса пыраççĕ. Вăрман хатĕрлев планне, укçа-тенкĕ пухмалли плана, государствăна аш-какай, сĕт-çу, çăмарта памалли плансене срокчен тултарнă.

Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн Президиумĕ Ольтикасси, Вĕрмер, Янчеллă ялсовечĕсене Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн «Чăваш республикинчи малта пыракан ялсовет» ятлă куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне пама кандидата тăратнă. Анчах ку вăл тунă çитĕнӳсемпе лăпланса лармаллине пĕлтермест-ха. Куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялава илме тивĕçлĕ пулас тесен, асăннă ялсоветсен, чи малтанах, хăйсен ĕçĕнчи ситменлĕхсене çывăх вăхăтрах пĕтермелле. Вĕсем ку таранччен вылăх-чĕрлĕх ĕрчетес тата вылăх-чĕрлĕх тухăçлăхне ӳстерес, шкулсене пулăшас, çулйĕрсене лайăх тытса тăрас енĕпе тата ытти чылай ыйтусемпе çителĕксĕр ĕçленĕ. Асăннă ялсоветсенчи хăшпĕр колхозсенче вылăх-чĕрлĕхсене хĕл каçарма хатĕрленесси çителĕксĕр пырать. Çак çитменлĕхсене халех пĕтерсе, ялсоветсен ĕçне малалла лайăхлатса пымалла.

Райсовет исполкомĕсен малта пыракан ялсоветсен ĕç опытне тĕплĕн вĕренсе, çав опыта пур ялсоветсене те сармалла тăвас пулать. Вĕсен уйрăмах лайăх ĕçлекен ялсоветсене, 1944 çулхи ноябрĕн 1-мĕшĕнчен кая юлмасăр, Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне илме кандидата тăратмалла.

ПИРĔН ÇĔРШЫВРИ ЧИ ВĂЙЛĂ ШАХМАТИСТСЕН ШАХМАТ ТУРНИРĔ

Иваново хулинче пирĕн çĕршыври чи вăйлă шахматистсен шахмат турнирĕ пулса иртнĕ.

Пĕррешĕмĕшпе иккĕмĕш вырăна Котов гроссмейстерпа Рагозин мастер йышăннă, вĕсем 11 очкоран 9-шар очко выляса илнĕ. Виççĕмĕшпе тăваттăмĕш вырăна Лилиенталь гроссмейстерпа Симагин мастер йышăннă. Пиллĕкмĕшпе улттăмĕш вырăна Ивановăри шахматистсем Батуев тата Овечкин йышăннă. (ТАСС).

КĔСКЕН

● Бейрут хулине Совет Союзĕн Сирири тата Ливанри [illegible]

● [illegible] хословаки çарĕн пĕрремĕш соединенийĕ çитнĕ. Ку соединени Англи çарĕн составне кĕрет.

● Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенче хальхи вăхăтра тăшманăн тыткăна лекнĕ çыннисем çакăн чухлĕ пурăнаççĕ: нимĕçсем — 248.000 çын ытла, итальянецсем 51.000 çын ытла тата японецсем 1.000 çын ытла.

● Америка самолечĕсем Филиппин утравĕсене юлашки хут тапăннă чухне Японин 65 пысăк суднине тата 30 яхăн пĕчĕк суднине шыва путарнă е сиенленĕ.

● Ноябрĕн 20-мĕшĕнче Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенче вăрçă заемне сармалли 6-мĕш кампани пуçланать. Ку хутра заем облигацийĕсене 14 миллиард долларлăх сарма йышăннă.

● США-ра Юнрра Совечĕн сессийĕ хупăннă. Юнрра совечĕн çитес сессийĕ 1945 çулта уçăлмалла. Ун чухне вăл тăшман оккупациленĕ пирки сиен курнă çĕршывсенчен пĕринче пулса иртмелле.

● Тăшманăн подводнăй лодкисем нумай пулмасть Караиб тинĕсĕнче американецсен танкерне торпеда ярса тивертнĕ. Танкер çапах та çывăхри порта çитсе кĕнĕ. Виллисем пулман. Сентябрь уйăхĕн пуçламăшĕнче тăшманăн подводнăй лодки США-н Атлантика çыранĕ çывăхĕнче американецсен суту-илӳ суднине тапăннă.

● Çак кунсенче Пĕтĕм тĕнчери хирургсен обществин Америка секцийĕн 9-мĕш съезчĕ пулса иртнĕ. Съездра пулнисем совет хирургĕсене питĕ саламса кĕтсе илнĕ. Совет хирургĕсем унта вăрçă вăхăтĕнче совет хирургийĕ тунă çитĕнӳсем çинчен докладсем туса панă. Совет хирургийĕ çинчен ӳкернĕ фильмсене кăтартнă, çав фильмсем съездри çынсене питĕ хытă интереслентернĕ. (ТАСС).

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ШУПАШКАРТИ КИНОТЕАТР

октябрĕн 11-мĕшĕпе 12-мĕшĕнче
кăнтăрла
АЧАСЕМ ВАЛЛИ
хусканакан пуканесенчен ӳкернĕ
«В КУКОЛЬНОЙ СТРАНЕ»
«КРАСНАЯ ШАПОЧКА»
«НОСОРОГ»
ятлă фильмсем
кăтартать.
Сеанссем çак вăхăтра пуçланаççĕ
10, 12, 14, 16 сехетре.
Каçхине
«УЧИТЕЛЬ»
ятлă саслă, илемлĕ фильм
кăтартаççĕ.
Сеанссем çак вăхăтра пуçланаççĕ:
18, 20, 22 сехетре.
Билетсем малтанах илсе хума юрать.
Касса ирхине 10 сехетрех ĕçлеме пуçлать.

Часах
Совет Союз Геройĕн
Зоя Космодемьянскаян
пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен ӳкернĕ
«ЗОЯ»
ятлă саслă, илемлĕ çĕнĕ фильм
кăтартма тытăнаççĕ.

Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи Автоуправление Шупашкарта ĕçлеме çакăн пек работниксем кирлĕ: бухгалтерсем, кадр отделĕн заведующийĕ, топливо хатĕрлекен базăн начальникĕ, шоферсем, мотористсем, слесарьсем, юсакан рабочисем.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, Союзная, 4. Автоуправление.

Шупашкарти «Пекарь» артеле ялан ĕçлеме çакăн пек работниксем кирлĕ: старши бухгалтер, бухгалтер, кассир-счетовод, статистик, хуçалăх заведующийĕ, техникăллă-контроль отделĕн начальникĕ, килте ĕçлекен çĕвĕçсем, пулăшакан рабочисем.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, Интернациональная, 2 (конец улицы Ворошилова), артель «Пекарь». Тел. 0—38 три звонка.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительпе секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 00736 Типография № 1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2, ф. б. 59×42 п. л. Тираж 16,000 экз.